Э. ЮРЬЕВ ÇУРАЛНĂРАНПА 65 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ МАЙ

# Хăвах эс пĕр тĕнче

(Элли Юрьева халалласа)

—Элли, пиччеçĕм, Юрьев,
Е — юлташла Элли,
Эс ху— пĕр чаплă юрă
Чăваш тĕнчи валли.

—Элли, тăванăм. Юрьев,
Е — аçу пек—Нямань,
Ялан ĕçленĕ тўррĕн,
Чăваш ятне яман.

Тĕнчӳ сан çўллĕ, капăр,
Тĕнчӳ — хĕвел таран,
Пире эс: мĕн хăратпăр?!
Тесе çул кăтартан.

Ăспа хăюлăх çулĕ
Чăваш чунне çĕклет,
Эллин çунатлă шкулĕ
Çўле вĕçме чĕнет.

Ăçта ăсчах шыравĕ
Авалăха уçать,
Пире Элли ялавĕ
Малашлăха туртать.

Яту яланлăх çўрĕ
Чăвашăн чунĕнче.
Элли Михайлыч Юрьев,
Хăвах эс пĕр тĕнче.

Порфирий АФАНАСЬЕВ,
Чăваш халăх поэчĕ.